Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

3 (8069) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республика Пуçлăхĕн стипендиачĕсем

## «Пуçарullă та пултарullă воспитатель»



*Ольга Юрьевна Прокопьева Муркашри «Путене» ача-пăча садĕнче 2008 çултанпа вăй хурать. «Питĕ пуçарullă та пултарullă воспитатель. Ачасемпе те, ашшĕ-амăшĕсемпе те лайăх хутшăнса ĕçлет. Вăл пирĕн ача садĕнче ĕçленĕшĕн эпир питĕ савăнатпăр. Республика Пуçлăхĕн стипендине вăл чăннипех те тивĕçлĕ», – Ольга Юрьевнăн ĕçĕпе кăмăллă пулнине хаваспах пĕлтерчĕ садик заведующийĕ И. Ферапонтова.*

*Çамрăк воспитатель кăçалхи çул «Аистенок» ушкăнри ачасемпе тимлет. Ачасене тĕрлĕ енлĕн аталантарма чылай ĕç пурнăçлать вăл. Çапах та çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх темине пысăк тимлĕх уйăрать. «Ачасем хăйсене хăйсем асăрхаса тăма та вĕренччĕр. Пурнăçра яланах кирлĕ пулать», – çапла шутлать хастар воспитатель.*

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Çамрăксем стипендие тивĕçрĕç

Чăваш Республикинчи пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене – 14 çул тултарнисенчен пуçласа 30 çулччен хисене – ятарлă стипенди парса чысланине хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Çак стипендие тивĕçекенсем хушшинче – вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракансем, бизнес-проект хатĕрлессипе, наука, пултарулăх, производство, ертсе пырас ĕç енĕпе çитĕнӳ тăвакансем.

Иртнĕ кунсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пултарулăхпа палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене 2013 çулта стипенди парасси çинчен хушу кăларчĕ.

Кăçал пирĕн районти 15 çамрăк çак хавхаланăва тивĕçрĕ, вĕсем уйăхсерен 1830 тенкĕ илсе тăрĕç:

- **Зоя Ивановна Антонова**, Сосновкăри тĕп шкулта акăлчан чĕлхине вĕрентекен;
- **Иван Олегович Бычков**, районти хушма пĕлӳ паракан «Ачасемпе çамрăксен пултарулăх çурчĕн» воспитанникĕ;
- **Татьяна Александровна Васильева**, Муркашри территори суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн секретарĕ;
- **Оксана Михайловна Дмитриева**, Йӳçкассинчи вăтам шкулта вĕренекен;
- **Димитрий Николаевич Ильин**, районти хушма пĕлӳ паракан «Çамрăк техниксен станцийĕн» воспитанникĕ;
- **Лина Владиславовна Кудряшова**, Ярославкăри информаципе культура центрĕн ертӳçи;
- **Татьяна Александровна Микрякова**, Муркашри тĕп больницăри хирурги уйрăмĕнчи медицина сестри;
- **Ирина Андрияновна Павлова**, Муркашри территори суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕ;
- **Ольга Юрьевна Прокопьева**, Муркашри «Путене» ача-пăча сачĕн воспитателĕ;
- **Инна Валериановна Сапожникова**, Орининти халăх театрĕн режиссерĕ;
- **Эдуард Владиславович Тихонов**, Йӳçкассинчи вăтам шкулта вĕренекен;
- **Екатерина Владимировна Федорова**, Юнкăри вăтам шкулта вĕренекен;
- **Оксана Георгиевна Федотова**, Орининти вăтам шкулти директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ;
- **Ольга Леонидовна Храмова**, «Моргаушская» чăхчĕп фабрикин технологĕ;
- **Елизавета Валерьевна Шишкина**, Юнкăри вăтам шкулти «Радуга» ача-пăча пĕрлешĕвĕн членĕ.

Комментари

## Инкекре пулăшусăр юлмĕç

Çĕрпӳ районĕнчи Туçи ялĕнче январĕн 15-мĕшĕнче ирхи 5 сехетре пулса иртнĕ инкек никама та лăпкăлăхра хăварма пултараймасть. 18 хваттерлĕ çак çуртра газ сирпĕннипе вăл ишĕлнĕ. Çак синкерте икĕ çын вилнĕ, татах икĕ çынна больницăна вырнаçтарма тивнĕ.

Çав кунах Туçи ялĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пулнă, инкек пулнă вырăна пăхса çаврăннă хыççăн ĕçлĕ канашлу ирттернĕ. Кунта çав кун Правительство комиссийĕ ĕçленĕ. Çурта юсаса çĕнетме май çук. Ăна ишсе çак вырăнтах çĕнĕ çурт çĕклеме палăртнă. ЧР Строительство министерствине проект ĕçĕсене пурнăçлама хушнă. Çĕнĕ çурта кăçалхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне хута яма планлаççĕ. Инкек тӳснисене ЧР патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн хваттерĕсене арендăна илме сĕннĕ. Инкекре вилнĕ икĕ çыннăн çемйине 1-шер миллион тенкĕ парса пулăшĕç.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ видеоçыхăну мелĕпе лару-тăрăва Раççей ГКЧС ертӳçипе Владимир Пучковпа тишкернĕ. Инкек курнисене федераци бюджечĕн шучĕпе пулăшассин ыйтăвне сӳтсе явнă.

**Район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн (унччен гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕ) пуçлăхĕ Николай МИЛЮТИН:**

– «Кăвак çулăм» пирĕншĕн епле ырлăх пулса тăрать пулин те, унпа усă курнă чухне питех те асăрханullă та тимлĕ пулмалли пирки самантлăха та манма юрамасть. Çавна çӳлте асăннă тĕслĕх те çирĕплетсе парать.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Сывлăх

## Ача çуратма – Шупашкара

***Муркашри тĕп больницăри ача çуратмалли уйрăм кăçалтанпа ĕçлеме пăрахрĕ. Çавăнпа çынсен тĕрлĕ ыйту çуралать. Больницăн тĕп врачне В. ДАНИЛОВА лару-тăрăва уçăмлатса пама ыйтрăмăр.***

**– Владислав Григорьевич, апла малашне Муркашри больницăра тин кăна çуралнă ача сасси илтĕнме пăрахĕ?**

– Çапла пулса тухать. Лару-тăрăва ăнлантарнă май вара юлашки çулсенче ача сахал çуралнине тата ача çуратакан хĕрарăмсем çирĕп сывлăхлă маррине каласа хăварни вырăнлă. Пулас амăшĕсем пурте сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнаççĕ теме çук: ĕçекеннисем те, пирус туртаканнисем те, хăйсене тивĕçлĕ тытманнисем те сахал мар. Çапла вара часчасах хавшак сывлăхлă ачасем çуралаççĕ.

Ача çуратнă чухне хĕрарăмпа пĕрле гинеколог врач тата реаниматолог врач пулмалла. Çакна положенипех çирĕплетнĕ. Мĕншĕн тесен хĕрарăма кирлĕ пулăшу пама яланах хатĕр тăмалла. Çавăнпа та хĕрарăмсем йĕркеллĕ условисенче ача çуратчăр тесе çĕр-шыври субъектсенче Европа шайне тивĕçтерекен перинаталлă центрсем тума йышăннă та.

Пирĕн республикăра та темиçе çул каяллах перинаталлă центр хута кайрĕ. Унти медицина оборудованийĕ питĕ лайăх, пур тĕрлĕ специалист та ĕçлет. Çавна май ача çуралнă чухне пулма пултаракан чылай инкеке вăхăтра сирме май пур.

Халĕ пирĕн района та çак перинаталлă центр патне çирĕплетнĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

## РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

### Призыв кампанине пĕтĕмлетрĕç

Районти призыв комиссийĕ пĕлтĕрхи кĕркуннехи призыв кампанине пĕтĕмлетрĕ. ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи уйрăмĕн пуçлăхĕ А. Кочуров çамрăксене çара палăртнинчен ытларах яма пултарнине, çара çирĕп сывлăхлă яшсем кайнине палăртнă. Салтак атти тăхăннисенчен 23 проценчĕ аслă пĕлӳ илнисем, 51 проценчĕ пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илнисем, 35 проценчĕ – РОСТО (ДОСААФ) автомобиль шкулĕсенче вĕреннисем.

Комисси членĕсем çамрăксене патриотла воспитани парассипе, яшсене çара кайма хатĕрлессипе Уйкас Янасал, Оринин тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче лайăх ĕçленине асăнса хăварнă. Çак ял тăрăхĕсенче çар учечен ĕçне çӳллĕ шайра йĕркеленине палăртнă.

### Ĕç вырăнĕсем пур

Ял хуçалăх сферинче специалистсем çителĕксĕрри ĕçе туллин йĕркелеме чарса пырать. Паянхи куна вара пирĕн районта 5 инженер, 4 агроном, 3 зоотехник, 2 бухгалтер çитмест. Кăçалхи ака-суха ĕçĕсене хутшăнма тата 27 механизатор çитменни паллă. Тухăçа пуçтарса кĕрес тапхăрта та тепĕр 38 механизатор кирлĕ пулассине палăртаççĕ, вăл шутра – 19 комбайнер. Çак çитменлĕхе пĕтерме кăçал вĕренсе тухакан специалистсене, харпăр хăй хуçалăхĕнчи резерври механизаторсене тата ытти хуçалăхсенчи механизаторсене ĕçе явăçтарма шантараççĕ.

### Служащисем ăсталăха ӳстереççĕ

«Раççей Федерацийĕн муниципаллă служби çинчен» тата «Чăваш Республикинчи муниципаллă службăна аталантарасси» республика программипе килĕшӳллĕн пирĕн район администрацийĕ муниципаллă служащисен ăсталăхне ӳстерессипе тимлет.

Çак кунсенче район администрацийĕнчи тата ял тăрăхĕсенчи 21 служащи ятарлă вĕренӳ курсĕсене кайнă, 3 служащи çĕнĕ професси илессипе РФ Президенчĕ çумĕнчи Раççейри халăх академийĕн тата патшалăх управленийĕн Шупашкарти филиалĕнче ăс пухаççĕ. Çакна валли район тата ял тăрăхĕсен бюджечĕсенчен пурĕ 40820 тенкĕ уйăрнă.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

### Кăçалхи тĕллевсене палăртрĕç

Районти предприятисемпе организацисенче иртнĕ çулхи ĕçе пĕтĕмлетсе, кăçалхи тĕллевсене палăртаççĕ. «Путь Ильича» агрофирмăра çакнашкал канашлу иртнĕ ытлари кун пулчĕ. Унта район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, экономикăпа АПК аталанăвĕн пайĕн специалисчĕсем, республикăри ăратлăх енĕпе ĕçлекен «Чувашское» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕпе И. Козинпа унти специалистсем, районти выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци ертӳçи Н. Яковлев, «Путь Ильичара» ĕçлекенсем хутшăнчĕç.

Чи малтанах пуçтарăннисем çĕнĕ сĕт-çу комплексĕнче пулса курчĕç.

Канашлура асăннă предприятин генеральнăй директорĕ О. Дельман сăмах илчĕ. Хуçалăха йĕркелесе ярас тесе тунă утăмсемпе унăн малашлăхĕ çинче чарăнчĕ. Олег Александрович ырă пуçарăва пурнăçлама пулăшса пынăшăн район администрацине тав турĕ.

Предприятин ĕç тăвакан директорĕ В. Вязов иртнĕ çул тунă ĕçсем çинче чарăнчĕ, коллектив членĕсене тăрăшса ĕçленĕшĕн тав сăмахĕ каларĕ.

«Путь Ильича» хуçалăхăн паян 1277 га çĕр. Вĕсем Ярославкăпа Турай ял тăрăхĕсенчи усăсăр выртакан çĕрсене те ĕçе кĕртрĕç. Çĕр лаптăкне тата тепĕр 500 га чухлĕ пысăклатасшăн. Пĕтĕмпе кунта 71 çын ĕçлет. Талăкра паян кашни ĕнерен 16 килограмм сĕт сăваççĕ. Январĕн 23-мĕшĕнче сăвакан ĕнесене çĕнĕ комплекса куçараççĕ. Кăçал кунта кашни ĕнерен 6 пин килограмран кая мар сĕт суса илме тĕллев лартаççĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев пуçтарăннисене район аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Çакнашкал çĕнĕ комплекс уçăлни экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса илме май панине, çавăн пекех çакă халăхшăн тунă утăм пулнине палăртрĕ. Ростислав Николаевич çавăн пекех ку предприятин çĕр лаптăкне ӳстерес ыйтупа районта ĕç пуçлани çинчен те асăнчĕ, çавăн пекех хуçалăх ĕçченĕсене ӳсĕмлĕ ĕçлеме ырă сунчĕ.

Канашлура выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе уçă калаçу пулчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Район центрĕнчен пуçланать Муркаш ен

**Ял тăрăхĕсенче**



***Кирек епле района, унăн пурнăç аталанăвĕн шайне пĕтĕмĕшле хак парасси чи малтанах район центрĕнчен пуçланать пулĕ. Муркаш пирки те çавнах каламалла. Çавăнпа та хамăр район пирки калаçатпăр пулсан чи малтанах район центрĕ, кунти çывăхри ялсем пирки сăмах пуçарас пулать. Тепĕр майлă каласан Муркашăн пĕтĕмĕшле хаклав шайĕнче Муркаш ял тăрăхĕн пĕлтерĕшĕ пысăк.***

***Паян редакци хăни – ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Ермолаев. Сергей Николаевичпа тĕл пулнă май эпĕ иртнĕ çул итогĕсене пĕтĕмлетме, малашлăх тĕллевĕсемпе задачисем пирки сăмах пуçарма ыйтрăм.***

***КĔСКЕ СПРАВКА. С. Ермолаев 1976 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче çуралнă. Аслă пĕлӳ илнĕ. 1996 – 1998 çулсенче çар ретĕнче службăра тăнă. Ĕç биографине 1998 çулта Муркашри линипе техника цехĕн электромонтерĕнчен пуçланă. 2002 – 2008 çулсенче çак çыхăну системинчех тĕрлĕ специализаципе инженерта вăй хунă. 2009 çулта 4-мĕш, хыççăн 5-мĕш линипе техника цехĕн пуçлăхĕн çумĕ пулнă. 2009 – 2011 çулсенче – Çĕмĕрлери районсем хушшинчи телекоммуникаци узелĕн, 2011 – 2012 çулсенче Çĕмĕрлери районсем хушшинчи çыхăну узелĕн директорĕ. 2012 çулхи июльтенпе Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ, октябрĕн 18-мĕшĕнченпе – ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.***

**– Сергей Николаевич, калаçăва иртнĕ çул итогĕсенчен пуçлар пулĕ.**

– Малтанах çавна каласа хăварасшăн. Ял тăрăхĕн территорийĕнче предприятисемпе организацисем чылай, 3 ача сачĕ, хушма вĕрентĕвĕн, сывлăха сыхлассин, вĕрентӳ, культура учрежденийĕсем вырнаçнă. Вĕсем çирĕп, йĕркеллĕ аталанса пыни ял тăрăхĕн пĕтĕмĕшле тăнăçлăхĕ çине те пысăк витĕм кӳреççĕ.

Иртнĕ çул ял тăрăхĕн бюджетне тупăшсем енĕпе 13395,8 пин тенкĕ пăхса хунăччĕ, тăкаксем енĕпе вара – 13999,7 пин тенкĕ. Хамăр вăйпа пухмалли-пуçтармалли укçа-тенкĕ сумми планпа 5846,8 пин тенкĕ пулнă. Çавна калама пултаратăп: мĕн палăртнине чыслăн ирттерсе пурнăçлама пултартăмăр. Пурлăхран, çĕрпе усă курнăшăн налук пухассипе япăх мар ĕçлерĕмĕр. Çĕре харпăрлăха сутса тупăш илессипе палăртнине икĕ хут ытла ирттерсе пурнăçларăмăр. 150 пин тенкĕне яхăн тӳлевлĕ пулăшу панă. Налукпа çыхăнман тупăш илесси те бюджетра пăхса хунинчен 1,5 хут ытларах пулчĕ.

**– Бюджетра укçа-тенкĕ япăх мар пуçтарăнать пулсан вара палăртнă ĕçсене те пурнăçлама майсем ытларах. Калăпăр, ялсен урамĕсенче çулсем тăвас, пуррисене кирлĕ шайра тытса тăрас енĕпе лару-тăру еплерех?**

– Ял тăрăхĕн территорийĕнчи пур ял патне те асфальт çулсем сарса çитерне, ытларах ялсенче те йĕркеллĕ çулсем пур пулин те, ыйту хăйĕн çивĕчлĕхне çухатман-ха. Хăш-пĕр ял урамĕсенче пурăнакансем халĕ те çурхи-кĕрхи йĕпе-сапа вăхăтĕнче пылчăкра тертленеççĕ. Нимĕн тума та çук. Хальхи вăхăтра çул тăвасси пысăк укçа-тенкĕпе çыхăннă. Ял тăрăхĕн бюджечĕ çулсем тума питех те çителĕксĕр.

Апла пулин те ку тĕлĕшпе алă усса ларатпăр тесе каламастăп. Акă Çурлатринчи Воробьев урамĕнче асфальт çул сарма сахалтан та 25 миллион тенкĕне яхăн укçа кирлĕ. Тепĕр майлă каласан ял тăрăхĕн икĕ çулхи бюджечĕ чухлĕ. Иртнĕ çул эпир ял урамĕнчи çула йĕркене кĕртме хамăр бюджетран 1,3 миллион уйăрма май çитертĕмĕр, унпа хăйăр турттартăмăр, вак чул сартăмăр. Муркашри Заводская урамра та çул юсавĕн ĕçĕсене туса ирттернĕ.

**– Нумай хутлă çуртсен картишĕсен территорийĕсене юсаса пăхса тăрасси мĕнле пулса пырать-ха?**

– Иртнĕ çул Муркашри Ленин урамĕнчи 28-мĕш тата Хĕрлĕ площадьри 4-мĕшпе 6-мĕш çуртсен, Гагарин урамĕнчи 20-мĕш çуртăн, Октябре 50 çул урамри 28-мĕшпе 30-мĕш çуртсен картишĕсен территорийĕсене юсаса тухнă. Çавна валли укçа-тенкĕне республика та куçарса пачĕ, хамăр бюджетран та уйăртăмăр.

**– Сергей Николаевич, çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе ыйтуллă самантсем çук-и?**

– Ял тăрăхĕн территорийĕнчи шыв уçламалли башньăсене, шыв пăрăхĕсен системисене «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятине çирĕплетсе панă. Шывпа усă курнăшăн ял çыннисенчен укçа-тенкĕне те предприяти хăй пухать. Ыйтуллă самантсемпе кăлтăксемсĕр тесе каламастăп. Шыв пăрăхĕсем кивелсе çитнĕ ĕнтĕ. Вĕсем унта е кунта шăтса кайнă тĕслĕхсем час-часах пулаççĕ. Апла пулин те пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ ку енĕпе оперативлă ĕçленине палăртмалла. Аварисене вăхăтра пĕтерме тăрăшаççĕ.

Акă Çĕнĕ çулхи уяв кунĕсенче Шаптак Муркашри шыв башнин насусĕ юрăхсăра тухрĕ. Кану кунĕсене пăхмасăрах аварие кĕске вăхăтра пĕтернĕ.

Юлашки вăхăтра Муркашра, Шаптак Муркашра уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче шыв счетчикĕсем вырнаçтарма тытăннине ырă енчен палăртмалла. Çакă çынсене шывпа перекетлĕрех, типтерлĕрех пулма хистет. Вăрттăнлăх мар: халĕ çуллахи вăхăтра пăрăхсем хурса ĕçмелли шывпа пахчасем шăваракансем те çук мар.

**– Тепĕр чухне вырăнсенче пулнă чухне çынсем хĕллехи вăхăтра ял урамĕсенчи çулсене юртан йĕркеллĕ тасатса тăманни пирки ӳпкелешсе калаçнине илтме тӳр килет. Эсир мĕн калама пултаратăр кун пирки?**

– Хамăр вăйпа юртан тасатса тăмалли çулсем пирĕн патра 15 километра яхăн. Çак ĕçе пурнăçлама Лариса Малышевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕпе килĕшӳ тунă. Çак вăхăта ку енĕпе пăтăрмахсемех пулман.

**– Тивĕçлисене социаллă çурт-йĕрпе, нумай ачаллисене çурт-йĕр тума çĕр участокĕсем уйăрса парассипе мĕнле ĕçлесе пыратăр-ха?**

– Харпăр хăй çурт-йĕр строительстви валли 9 çĕр участокĕ уйăрнă. Нумай ачаллă çемьесене вĕсемпе тивĕçтерессипе татса памалла мар ыйтусем çук.

Муркашри Октябре 50 çул урамри 12-шер хваттерлĕ 26-мĕшпе 32-мĕш номерлĕ çуртсене кăçал аварилисен шутне кĕртме палăртатпăр. Çавна май вĕсене урăх çурт-йĕр уйăрса парассипе проектсем хатĕрлес ĕçсем пуçăннă ĕнтĕ. Тепĕр тăлăха пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермелле пулать. Хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен черетĕнче тăнă вăрçă участникĕсене пурне те хваттерсемпе тивĕçтернĕ ĕнтĕ.

**– Сергей Николаевич, иртнĕ çул Муркаш ял тăрăхĕ ялсене тирпей-илем кĕртессипе Раççей ăмăртăвĕнче 3-мĕш вырăна тивĕçнĕччĕ...**

– Тасалăх, тирпей-илем ыйтăвĕсене малашне те манăçа кăларма шухăшламастпăр. Çакă вăл хамăршăнах. Раççей шайĕнче палăрнăшăн вара ял тăрăхĕ 800 пин тенкĕ премие тивĕçрĕ. Унпа ача-пăча площадкисене вырнаçтармалли хатĕрсем, тротуарсене юртан тасатмалли техника тата ыттине те туяннă. Çуллахи вăхăтра территорисене тасатса тăма ятарлă бригадăсем йĕркелетпĕр, субботниксем ирттересси йăлана кĕнĕ, шкул ачисем те çак ĕçсенчен айккинче юлмаççĕ. Ытларах чухне администраци ĕçченĕсем хăйсем те тĕслĕх кăтартаççĕ.

**– Хальхи вăхăтра сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси, массăллă физкультурăпа спорта аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.**

– Пирĕн патра та ку çаплах. Пĕр тĕслĕх кăна. Эпир иртнĕ çул ноябрь уйăхĕнче ытти ял тăрăхĕсем хушшинче пĕрремĕш сĕтел çи теннисĕ енĕпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, вырăнсенчи депутатсем тата специалистсем хушшинче ăмăрту йĕркелерĕмĕр. Халĕ çак пуçарупа спортăн тĕрлĕ енĕпе ытти ял тăрăхĕсенче те ăмăртусем йĕркелеме пуçăнчĕç. Асăннă ăмăртăва кăçал та йĕркелеме пăхнă.

**– Сергей Николаевич, хамăрăн калаçăва пĕтĕмлетнĕ май юлашкинчен мĕн калас кăмăл пур?**

– Депутатсене, ял старостисене, ытти ответлă ĕçченсене çапла чĕнсе калас килет. Çынсем пире суйланă, шаннă, ĕненнĕ. Апла пулсан çак шанăçа тӳрре кăларма пĕрле тăрăшас пулать. Йывăрлăхсем умĕнче пуç усма кирлĕ мар. Алла-аллăн, пĕрпĕрне ăнланса ĕçлесе пырсан малашлăхри ӳсĕмсем сулмаклăрах пулĕç, татса памалли ыйтусем те сахаллансах пырĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

**Саламлатпăр**



Пирĕн юратнăран та юратнă çыннăмăра – Нискасси ялĕнче пурăнакан **Лидия Геннадьевна ВОЛКОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн хĕрӳллĕн саламлатпăр. Кунçулăр чăваш сурпанĕ пек вăрăм, сывлăхăр юман пек çирĕп пултăр, сăн-питĕрте ялан йăл кулă çиçтĕр, юратупа телей, хавхаланупа ăнăçу сан çумрах çӳреччĕр, мĕн шухăшлани пурнăçланса, ĕмĕтленни çитсе пытăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, амăшĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Зоя Егоровна СЕРГЕЕВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Пурнăç çулĕпе малашне те çирĕппĕн утма ырлăх-сывлăх, тулли телей, ăнăçу сунатпăр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ килтĕр. Турă сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăç.

**Саламлаканĕсем: юратнă амăшĕ, Еремеевсем, Ершовсем, Никитинсем, Сорокинсем, Сергеевсем.**



Хаклăран та хаклă юратнă аттепе аннене, кукаçипе кукамая, асаттепе асаннене – Якаткасси ялĕнче пурăнакан **Василиса Николаевнăпа Геннадий Иванович ИВАНОВСЕНЕ** паян 75 çулхи сумлă юилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе, ырă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăй-хал сунатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр, кĕреке çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Малашне те ачăрсемпе, мăнуксемпе, мĕн пур тăванпа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Сире эпир яланах юрататпăр, эсир пурри пирĕн телей, ĕмĕрӳсем вăрăм пулччăр. Турри сире татах та вăрăм кун-çул пиллетĕр, телей кăна парнелетĕр.

**Саламлаканĕсем: 6 ачи, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, 15 мăнукĕ, 7 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă юратнă аннене, кукамая, аппана, мăнака – Автанкасси ялĕнче пурăнакан **Зинаида Арсентьевна ВАСИЛЬЕВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Тĕнчери мĕн пур ыррине сунатпăр сана, хаклă çыннăмăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăй-хăват патăр сана Турă.

Эс пурри пире савăнтарать,<br>
Пурăнма тата хăват парать.<br>
Ялан пул эс пирĕнпе пĕрле,<br>
Йышра, тулли кĕрекере.

**Ăшă салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ Камилла, çывăх тăванĕсем.**

**Комментари**

## Инкекре пулăшусăр юлмĕç

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

Кунта районти чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен комисси асăрхаттарăвĕсене пĕр пăрахланмасăр пурнăçлани питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ:

– газ оборудованийĕсемпе тата приборĕсемпе усă курнă чухне инструкцисене çирĕп пурнăçламалла;

– газ оборудованине вăхăтра техобслуживани тумалла;

– газ приборĕсем яланах юсавлă та таса пулмалла;

– пӳлĕмре газ шăршине сиссенех газ приборĕсемпе усă курма чарăнмалла, крансене хупмалла, форточкăсене е чӳречесене уçмалла, газ хуçалăхĕн авари службине 04 е 62-0-04 телефонпа шăнкăравласа пĕлтермелле;

– газпа усă курман чухне крансене хупмалла;

– газ приборĕсене хăвăр тĕллĕн вырнаçтарма е юсама юрамасть;

– газ приборĕсемпе усă курнă чухне форточка тата вентиляци каналĕсем уçă пулмалла;

– ĕçлекен газ приборĕсене пăхмасăр пăрахса хăвармалла мар;

– шкул çулне çитмен ачасене газ приборĕсемпе усă курма ирĕк памалла мар;

– газпа тата газ приборĕсемпе тĕллевлĕ кăна усă курмалла;

– газ плитисемпе пӳлĕмсене ăшăтма усă курмалла мар;

– газ приборĕсем вырнаçтарнă пӳлĕмре çывăрма юрамасть.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен газ хуçалăхĕн ĕçченĕсемпе, полицин участоксенчи уполномоченнăйĕсемпе пĕрле йĕркеллĕ мар çемьесенче, пĕччен пурăнакан ватă çынсем патĕнче пулса курас пулать. «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн авари газ служби телефонĕсем – 04; 60-2-24; кĕсье телефонĕпе 112 номерпе шăнкăравламалла; районти пĕрлехи дежурнăй диспетчер служби телефонĕ – 62-7-34.

### ЯПАЛАСЕМ ПУХМА ПУÇЛАНĂ

Раççей Хĕрлĕ Хĕресĕн Чăваш Енри уйрăмĕ шар курнисене пулăшма апат-çимĕç тата тумтир пухассине йĕркеленĕ. Япаласене кашни кун 10 сехетрен тытăнса 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 31-мĕш çурт. Кăсăклантаракан ыйтусен хуравне Раççей МЧС Чăваш Енри Тĕп управленийĕн «хĕрӳ линийĕн» телефонĕпе (+7(8352) 39-99-99) е РФ Хĕрлĕ Хĕресĕн Чăваш уйрăмĕн представительствине 8-961-345-42-43 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

Раççей Хĕрлĕ Хĕресĕн Чăваш уйрăмĕн реквизичĕсем:
р/с 40703810300000007610 в АКБ Чувашкредитпромбанк ОАО г. Чебоксары
к/с 30101810200000000725
БИК 049706725

**Постановление**

**Постановление главы администрации Кадикасинского сельского поселения**
**№ 6 от 16 января 2013 года.**

**О проведении публичных слушаний по вопросу о внесении изменений в Генеральный план администрации Кадикасинского сельского поселения**

В целях установления границ населенных пунктов, входящих в состав Кадикасинского сельского поселения, в соответствии с Градостроительным кодексом Российской Федерации, Федеральным законом Российской Федерации от 06.11.2003 № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», Законом Чувашской Республики от 04.06.2007 № 11 «О регулировании градостроительной деятельности в Чувашской Республике», «Положением «О составе, порядке подготовки проекта генерального плана Кадикасинского сельского поселения и внесения в него изменений, составе и порядке подготовки планов реализации генерального плана Кадикасинского сельского поселения», утвержденное решением Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения от 22.07.2008 года за С-27/2», руководствуясь Уставом Кадикасинского сельского поселения **п о с т а н о в л я ю**:

1. Провести «28» февраля 2013 года в 14-00 публичные слушания для обсуждения вопроса по внесению изменений в Генеральный план муниципального образования Кадикасинское сельское поселение с целью расширения границ деревни Чурикасы Моргаушского района Чувашской Республики с восточной стороны.
2. Создать комиссию по проведению публичных слушаний по данному вопросу согласно приложению.
3. Определить место расположения демонстрационного материала для проведения публичных слушаний: здание администрации Кадикасинского сельского поселения, расположенный по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Кораккасы, ул. Новая, 1.
4. Определить место проведения публичных слушаний здание администрации Кадикасинского сельского поселения, расположенный по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Кораккасы, ул. Новая, 1.
5. Контроль за выполнением настоящего постановления оставляю за собой.
6. Постановление вступает в силу со дня его официального опубликования.

**Глава администрации Кадикасинского сельского поселения Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

# Ача çуратма – Шупашкара

Сывлăх

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**– Ытти районсенче те лару-тăру çакăн пекех-и?**

– Район больницисенче ача çуратмалли уйрăмсене хупма халĕ кăна мар, чылай малах пуçланă – 5–7 çул та çитет. Пирĕнпе кўршĕллĕ районсенче ку ĕçе тахçанах пурнăçланă темелле. Кўршĕ районсенчи ĕçтешсем ку енĕпе çивĕч ыйтусем тухса тăнине асăнмаççĕ.

Эпир май пур таран çак уйрăма сыхласа хăварса тытса тăтăмăр. Ача çуратаканпа пĕрле гинеколог та пулнă, реаниматолог врача та явăçтарнă. Йывăррăн çăмăлланма пултаракан хĕрарăмсене вара маларах перинаталлă центра янă. Пирĕн патра юлашки çулсенче вăтамран 200–250 хĕрарăм ача çуратнă. Хăйсен ирĕкĕпе Шупашкара та ача çуратма çавăн чухлех кайнă. Çавăнпа та пирĕн районта ку тĕлĕшпе çивĕч ыйтусем пулмалла марри куç кĕрет.

Республикăн кăнтăр районĕсенчен, сăмахран, ача çуратма Патăрьелне каяççĕ, Канаш хулине. Кунсăр пуçне Улатăр тата Çĕмĕрле хулисенче ача çуратмалли суртсем пур. Паллах, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче те.

Раççей Федерацийĕн Сывлăх сыхлавĕн министерствин хушăвĕпе çулталăкра 500 ачаран сахалрах çуралакан ача çуратмалли уйрăмсене пăрахăçласа ĕçе централизацилеме палăртнă. Централизацин уссине 2011 çулхи пĕтĕмлетў те кăтартса пачĕ: çав çулталăкра çуралакан ачасем вилнин кăтартăвĕ Чăваш Енре çĕр-шывĕпе те чи пĕчĕкки пулнă, Анăç енчи пекех.

Малалла 1 килограмран нумайрах таякан ачасене кăна пурăнма пултаракан ача шутне кĕртнĕ пулсан, халĕ çак виçе 500 грампа танлашать. Çавăнпа та çакăн пек ача çуралсан ăна тĕрĕс пăхса ўстерме вăхăтлă пулăшу памалла. Çакна валли перинаталлă центрта условисем çителĕклĕ.

**– Хĕрарăмсен консультацийĕ тата пулас амăшĕсене йышăнакан пўлĕмсем пур пĕр пушă пулас çук.**

– Ку пўлĕмсем йĕркеллех ĕçлесе пырĕç. Пулас амăшĕсене пăхса тăрасси малашне те тивĕçлĕ шайрах пулать. Ача çуратмалли уйрăм вырăнĕнче, юсав ĕçĕсем туса ирттерсен, гинекологи уйрăмĕ уçăлать. Çапла вара халĕ хирурги уйрăмĕнчи палата та унта куçать, поликлиникăри маларах асăннă пўлĕмсем те хăйсен ĕçне çак уйрăмра туса пырĕç. Гинекологи уйрăмĕнче пулас амăшĕсем валли койка вырăнсем пулаççĕ.

Уйрăма пăрахăçланă май унта ĕçленĕ медицина ĕçченĕсем ĕççĕр юлмаççĕ. Вĕсене валли ĕç пулать.

Ача çуратма хатĕрленекен хĕрарăмсен малашне çăмăлланма вăхăт çитсен Шупашкара каймалла пулать. Кун пирки хĕрарăмсене консультацисенче ăнлантарĕç. Больницăна кĕтмен çĕртен шăнкăравламалла пулса тухсан вара пирĕн васкавлă пулăшу уйрăмĕнче вĕсене валли яланах машина хатĕр. Муркаш тăрăхĕнчи хĕрарăмсем малашне тата лайăххах условисенче ача çуратасса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**




# Пархатарлă тивĕçе пурнăçлать

Учитель – эпир хамăрăн ачасене воспитани пама шаннă çын. Вăл вулама, çырма, шутлама вĕрентет, вăлах ачасем ăнланулăха, тĕрĕслĕхе, ответлăха тата хастарлăха хăйсем çинче туйса ўсчĕр тесе тăрăшать. Учительсем тăрăшнипе, вĕсен ответлăха туйса ĕçлес ен пуррипе паянхи шкулсем аталанса пыраççĕ те.

Лариса Вениаминовна Григорьева Йўçкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлў паракан вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентет. Кăçал унăн ачисем 2-мĕш класра вĕренеççĕ.

Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи пуçламăш классен факультетне пĕтернĕ вăл. Унтанпа шкулта тăрăшать. Ачасене те, хăйĕн ĕçне те юратать Лариса Вениаминовна. Ĕçе парăннă çын тесе калас килет ун пирки. Çакă вара ăна тата вăй-хăват парать. Вăл хăйĕн тивĕçне пур кăмăлпа пурнăçлать.

Л. Григорьевăн кăрлачăн 22-мĕшĕнче çуралнă кунĕ. Хисеплĕ Лариса Вениаминовна! Сире уяв ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп кăмăл, хавхалану, ĕçре ăнăçусем, тулли телей, ырлăх-сывлăх сунатпăр. Эсир питĕ пултаруллă, яваплăха туйса ĕçлекен, çĕр çинчи чи сумлă та пархатарлă тивĕçе пурнăçлакан çын. Пирĕн ачасене ыррине çеç вĕрентнĕшĕн, яланах çирĕп ăс-тăн панăшăн, тавракурăма аталантарма пулăшнăшăн эпир сирĕн умăрта пуç таятпăр, эсир пурришĕн савăнатпăр, çак пархатарлă ĕçшĕн сире тав сăмахĕ калатпăр.

**2-мĕш класра вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем.**

**Сăн ўкерчĕкре: Л. Григорьева.**

# Сире «Ырă кăмăллăх» клуб кĕтет

Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра «Ырă кăмăллăх» клуб ĕçлет. Ăна 1997 çулта йĕркеленĕ. Вăл, çулĕпе çамрăк пулин те, чылай инвалида пулăшма, хўтĕлеме ĕлкĕрчĕ. Клуб ĕçне кунта тимлекен Т. Иванова **(сăн ўкерчĕкре сулахайри)** ертсе пырать. Ырă пуçарăва вăй кĕртме вара Р. Куликова библиотекарь тытăннă.

Камсене пĕрлештерет-ха асăннă клуб? Çакă сывлăх енчен кăлтăклă çынсемшĕн питĕ кирлĕ те вырăнлă йĕркелў. Вăл инвалидсен информаци тата реабилитаци центрĕ шутланать. Кунта кирек хăçан та чуна уçса калаçма, кăмăл пулсан вăл е ку специалиста хутшăнтарма май пур. Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, пурнăçра тĕрлĕрен кĕнчеле. Пĕчченлĕх çынна пусарать кăна. Ăшра капланнине икке пайласан вара çăмăлрах та пулĕ. Инвалидсен чун ыратăвне тĕпе хурса тимлет те асăннă клуб. Унăн ĕçĕ ятарлă программăпа килĕшўллĕн пурнăçланать. Кунта тăтăшах творчество каçĕсем, информаци сехечĕсем, электронлă презентацисем, кĕнеке куравĕсем иртеççĕ. Тĕп калаçу тата ĕç – хевтесĕр çынна куллехи пурнăçра пулăшу алли тăсса парасси.

Кашни çыннăн хăйĕн правине пĕлмелле, хăйне хўтĕлеме пултармалла, паллах, саккунсене пĕлнипе. Ку енĕпе вара пирĕн çитменлĕх самай палăрать е тĕрлĕ çĕнĕлĕх вăхăтра ăнкарасси уксахлать. «Ырă кăмăллăх» клубра вара кирек епле информацие те пĕлме-тупма пулать. Юлашки вăхăтра кĕнеке вуласси

Чунра пухăнни тавра




кăштах чакрĕ пулин те, унăн пĕлтерĕшĕ пурнăçра питĕ пысăк. Акă **сăн ўкерчĕкри** Аня Столярова пачах та курмасть, апла пулин те вăл вунă тĕрлĕ издани çыранса илет. Тĕрлĕ мелпе тухаканскерсене кăмăлласах вулать тата итлет. Унсăр пуçне тăтăшах кунти библиотекăна çўрет. Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.

– «Ырă кăмăллăх» клуб Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕшĕн тĕп пулăшуçă пулса тăрать. Эпир кирек епле ĕç ирттерес пулсан та вĕсенчен пулăшу-канаш ыйтатпăр. Малашне те пирĕн тĕп пулăшуçă аталансах пытăр,– терĕ асăннă организаци ертўçи А. Михайлова.

Палăртма кăмăллă, «Ырă кăмăллăх» клуб ĕçĕ республика шайĕнче те лайăххисен шутĕнче. Ăна тĕслĕхе илеççĕ, унран вĕренеççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ашшĕ-амăшне пĕлме

# Ачана мĕнле теттесем кирлĕ?

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте).**

Икĕ çулхи ачасемшĕн тĕрлĕ тĕслĕ мечĕк, 7–8 тĕслĕ пирамида кирлĕ. Вăл теттесене çăвара хыпмасть пулсан çемçе теттесем те туянса памалла. Çакăн пек теттесене юнашар хурса ачасем лайăх çывăрса каяççĕ. Пысăк пластмасса курупка е пысăк прицеплă машина вара ачана тирпейлĕхе вĕрентме пулăшаççĕ. Вылянă хыççăн ача унта хăйĕн теттисене пуçтарса хума хăнăхать. Хваттерте ачан ятарласа йĕркеленĕ вылямалли кĕтес пулсан лайăх.

Виçĕ çулхи ачан тетте татах та ытларах пулмалла. Сăмахран, пухма йывăрах мар конструкторсем. Вĕсене пухассине аслисен те хутшăнмалла, ачана хавхалантарса пымалла. Çак вăхăт тĕлне ача çынсен ĕçленине, вĕсен тĕрлĕ лару-тăрăва лекме пултарнине ăнланма тытăнать. Ачасем тĕрлĕ рольсене йышăнса «амăшĕпе хĕрĕсем», «лавккалла», «больницăлла» тата ытти вăййăсене выляма пуçлаççĕ. Çавăнпа та вĕсем пысăкрах пуканесемпе, çемçе теттесемпе вылясшăн. Вăййа кирлĕ тĕрлĕ савăт-сапа, сĕтел-пукан пуххи, тухтăр усă куракан тата çакна май ытти теттесем илсе памалла.

Тăватă çулта ачан вăййисем «йывăрланаççĕ», тытăмĕпе те пуянланаççĕ. Малтан вылянă чылай тетте кирлĕ мар пулса тăрать. Мĕншĕн тесен ачасен шухăшлавĕ те анлăланать. Вĕсем ахаль кăранташранах «асамлă кăранташ» тума пултараççĕ, хутран – укçа, илемлĕ сăмса тутринчен – пукане валли утиял тата ытти те.

Пилĕк çулхи ачасен пысăк теттисем çўлĕксем çинчен «анманнинчен» тĕлĕнме кирлĕ мар. Çак вăхăтра ача вĕсемпе сахалтарах усă курма пуçлать. Пуканесен çемйисем, салтаксен ушкăнĕсем ачана ытларах интереслентереççĕ. Çакăн евĕр теттесемпе вăл тĕрлĕ сюжетлă вăййăсем шутласа кăларать: пĕрре пĕр майлă, тепринче – пачах та урăхлине.

Улттă çулта ача конструкторсем пухма, карап е самолет моделĕсемпе интересленме пуçлать, сĕтел çинче вылямалли вăййăсене, сўтсе пуçтармалли теттесене килĕштерет. Хăй те тетте ăсталаса кама та пулин парнелеме тăрăшать. Çакăнпа вăл татах та хавхаланать. Ача çилĕмпе, хутпа, хачăпа ĕçлеме юратни сисĕнет. Илемлĕ фломастерсемпе ўкерчĕксем тăвать. Çакă пĕтĕмпех унăн ĕçлеме пултарăслăхне, чăтăмлăхне аталантарать. Ача çапла май пĕчĕккĕн хăйне шкула хатĕрлеме тытăнать.

Шкула çўрекен ачасем теттесемсĕр вăйăсем выляма пуçлаççĕ. Вĕсен юлташсемпе выляс кăмăл пысăк. Тĕрлĕ вăййăсенче ача çĕнтерме е выляса яма, пĕччен е ушкăнпа ĕçлеме, вăйă йĕркине пăхăнма хăнăхать.

**З. ТРОИЦКАЯ,**
**«Путене» ача-пăча сачĕн аслă воспитателĕ.**

Следстви комитетĕнчен

# Унтанпа икĕ çул çитрĕ

Раççей Федерацийĕн следстви комитечĕ хăй ĕçне уйрăм орган шайĕнче пурнăçлама пуçланăранпа январĕн 15-мĕшĕнче икĕ çул çитрĕ. Муркаш районĕ следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн тытăмĕнче тăрать. Çĕнĕ орган ертўçинче Е. Виссаров вăй хурать, районти ку тĕлĕшри ĕçхĕле И. Федотов ертсе пырать.

Пĕтĕмĕшле илсен пирĕн пай ĕçченĕсем иртнĕ çул 136 ĕç тĕлĕшпе следстви ирттернĕ, вĕсенчен 133-шĕ айăплав йышăнăвĕпе вĕçленнĕ. 8 преступлени тĕлĕшпе малах пуçарнă ĕçе вĕçленĕ. Çынăн, патшалăхăн тата обществăн саккунлă интересĕсене кирлĕ пек хўтĕлесси, çавăн пекех коррупципе кĕрешесси следстви комитечĕн ĕçченĕсен ăсталăхĕпе тўрремĕнех çыхăннă.

**Е. ВИССАРОВ,**
**следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ертўçи.**

Редакци почтинчен

# Маттур та иккен эсĕ, Настя!

Халĕ шкул ачисен тĕрлĕ олимпиада-конкурса хутшăнма майсем чылай – Интернет урлă усăллине темĕн те пĕлме пулать.

Нумаях пулмасть пирĕн шкулта вĕренекен Настя Атласкина дистанци мелĕпе иртнĕ пĕтĕм тĕнче шайĕнчи олимпиадăна хутшăнчĕ. Олимпиадăна ăс-тăна аталантаракан «Перспектива» центр ирттерчĕ. Настя литература енне суйласа илчĕ. «Осенний марафон» конкурсра вăл 6 классем хушшинче 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. Конкурса тĕрлĕ ĕçсем тăратмалла пулнă: «Литература мĕне вĕрентет» ăслав çырмалла, литературăри геройсене асăнса палăксем ăçта лартнине пĕлмелле, сăвă тишкермелле тата ытти те. Конкурса хутшăнма Настьăна вырăс чĕлхине вĕрентекен Алиса Николаевна Иванова пулăшнă.

Сăмах май Настя «Альбус» олимпиадăра та 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. Питĕ маттур хĕр ача Настя. Эпир те ун пек пулма тăрăшатпăр.

**Вероника МУЗЫКОВА,**
**5 класра вĕренекен.**

Атапайри тĕп шкул.

# 2 çул ирĕкрен хăтармалла тунă

Муркаш район сучĕ 34 çулхи преступник тĕлĕшпе приговор йышăнчĕ. Август уйăхĕнче М – 7 «Мускав – Ĕпхў» федераллă автоçулăн 611 километрĕнче Юнкăпуç ялĕ çывăхĕнче хăрушă инкек пулнă. «Лада Калина» автомашинăпа Чул хула еннелле пыракан водитель автозаправкăналла пăрăнмалли вырăнта хăрушсăрлăх правилине пăхăнман. Çавна май хирĕçле çул çине тухнă, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн автомашинине çапăннă. Иккĕмĕшĕ вара çулйĕр правилине пăсса пысăк хăвăртлăхпа пыракан мотоциклист хыççăн ятарлă сасăпа тата паллăпа хăваланă пулнă. Çапла вара инкекре патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн автомашини çинчи çирĕм пилĕк çулхи сотрудник пурнăçĕ татăлнă, йывăр суранланнă водителе вара больницăна илсе çитерме тивнĕ.

Инкекре кам айăплине тупса палăртас тĕллевпе тĕрлĕ экспертиза ирттернĕ. Сăнав камеринче çак самантпа çыхăннă тапхăра тĕплĕн тишкернĕ. Çавна май преступлени факчĕсене çирĕплетнĕ, айăплă водителе икĕ çул ирĕкрен хăтарма йышăннă.

**Пичете следстви комитечĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

# Яваплăха кашнин туймалла

Лăпкăлăх никĕсĕ – пĕрлехи тăрăшулăхра



Пирĕн çĕр-шыв историйĕ çут çанталăк кăларса тăратакан инкексемпе, вĕсене пула сиксе тухакан хăрушлăхпа, вăрçă-харçăпа тата ытти чрезвычайлă лару-тăрупа яланах «пуян» шутланнă. Çакă пирĕн халăхăмăра яланах сыхă пулма ыйтнă. Вырăс халăхĕ те, чăваш çынни те çакна яланах ăнланса вĕсемпе кĕрешме хатĕр тăрассине кун йĕркинчен самантлăха та кăларман. Хăрушлăхсем вĕсене пĕтĕçтернĕ. Асаттесемпе асаннесем асăрханулăха пĕрмаях вĕреннĕ, вĕрентнĕ тата ăна ăруран ăрăва куçарса пынă.

Ĕмĕртенпе пыракан хăрушлăхсем умĕнче «хĕрлĕ автан» тĕп вырăн йышăнать. Ăна хатĕр пулманни, унран сыхланманни, пушар тухсан çухалса кайни миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе тата çынсен пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнипе çаврăнса тухать.

Иртнĕ раштав уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Чрезвычайлă лару-тăру министерствине туса хунăранпа 22 çул çитнине паллă туса Çĕнĕ çул умĕн районта пушарпа прикладной спортăн хĕллехи черетлĕ ăмăртăвĕ иртрĕ. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи кӳлĕ çинче вакăран насуспа шыв илсе условнăй пушара сӳнтерессипе ял тăрăхĕсен ирĕклĕ пушар хурал командисем ăмăртрĕç. Пушар хăрушсăрлăхĕпе кĕрешесси кашнин тивĕçĕ пулнине шута хурса старта тухнă 6 команда участникĕсем пушарнăй çи-пуçне вăхăтпа тăхăнассипе те тупăшрĕç. Спорт ăмăртăвне пĕтĕмлетнĕ май командăсем вĕрен туртса вăй виçни курма пынисемшĕн хăйне евĕр интереслĕ пулчĕ. Халĕ ăмăртăвăн кашни тĕсĕпех çил-тăманран хăраса кӳлĕ çине анманнисене йĕркипе каласа парар-ха.

Ăмăртăва уçма хатĕрри пирки районти пушар гарнизонĕн пуçлăхĕ И. Смирнов район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, обществăлла инфраструктура аталанăвĕпе капиталлă строительство управленийĕн ертӳçине В. Никитина пĕлтерчĕ. Владимир Германович пирĕн енре пушар хăрушсăрлăхĕ çине чи çӳллĕ шайран пăхма сăлтавсем пурри пирки чарăнса тăчĕ. Çак ăмăрту çине пӳрне витĕр пăхнă ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене ятранах палăртма сĕнни те чылайăшне тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума хистетех тесе шутлатăп. Ку пĕтĕмлетӳ вара çапларах. Ăмăртăва ытти ял тăрăхĕсемпе пĕрле Ярапайкассисем, Ильинкăсем, Шетмĕпуçсем, Ориниснсем, Ярославкăсем, Катькассем, Уйкас Янасалсем, Мăн Сĕнтĕрсем, Турайсем, Юнкăсем хутшăнма кăмăл тумарĕç. Вĕсем хăйсене ыттисенчен çӳлерех тытрĕç-ши, çил-тăманран хăрарĕç-ши е пушар хăрушсăрлăхĕ ку ял тăрăхĕсемшĕн иккĕмĕш вырăнта тесе шутлаççĕ-ши? Хуравне хăйсем пĕлеççĕ-тĕр. Анчах... Юрĕ, ответсăррисем çинчен калаçса çитĕ.

– Пирĕншĕн пушар – тĕп хăрушлăх. Паянхи ăмăртура эсир унпа кĕрешме епле хатĕррине уçăмлăн кăтартса парасса шанатăп. Сăмах май пушарпа прикладной спортăн хĕллехи ăмăртăвне Муркашсем республикăра пуринчен малтан çул пани пире ответлăрах пулма хистет. Сирĕн паянхи кăтартусем çавăн паллисем пулĕç те, – терĕ ăмăртăва пуçлама ирĕк парса В. Никитин. Муркашсем кунта та республикăшăн тĕслĕх пулнине хăйĕн сăмахĕнче ЧР Чрезвычайлă лару-тăру службин патшалăх комитечĕн пушар хурал учрежденийĕн пуçлăхĕн çумĕ Вячеслав Укладов уйрăммăн палăртрĕ.

Шăпа янă йĕркепе условнăй пушара сӳнтерме пуринчен малтан Йӳçкассисем старта тухрĕç. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Кузьмин хăй команда йышăнче пулни ыттисемшĕн ырă тĕслĕх çеç пулчĕ. Çак пуçарăва ун хыççăн ăмăртăвăн тĕрлĕ тĕсĕсенче Г. Трофимов (Çатракасси), А. Матросов (Москакасси), М. Колесникова (Хорнуй), Н. Белов (Чуманкасси), С. Ермолаев (Муркаш) малалла тăсрĕç.

Пĕтĕмлетӳ те кĕттермерĕ. Насуспа вакăран шыв илсе условнăй пушара сӳнтерессипе Муркашсене **(сăн ӳкерчĕкре)** çитекенни пулмарĕ. Хыççăнхи вырăнсенче Çатракассисемпе Йӳçкассисем, пушарнăй çи-пуçне тăхăнассипе те Муркашсем хастартарах пулни курăнчĕ. Çак командăри И. Ораинпа А. Казаков чи çивĕччисем пулчĕç. Вĕрен туртассипе Çатракасси ял тăрăхĕн команди пуринчен те вăйлăраххи пулчĕ.

Ăмăртăвăн пур енĕсене те тишкерсе пĕтĕмлетсен Çатракасси ял тăрăхĕнчен килнĕ пушарнăйсем чи вăйлисем пулни куç умне тухрĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Прокуратурăран

# Чун-чĕрене çӳçентерет

Паллă ĕнтĕ, кирек епле инкек-синкек те эрех ĕçнипе пуçланать. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пулнă преступлени те çав шутах кĕрет. Малтанхи айăплавпа татăлнă Лена тăтăшах эрех ĕçкелет, хăш чухне виçерен те тухать. Акă ку хутĕнче те вĕсем хăйпе пĕрле пурăнакан Петĕрпе хăнана кайрĕç, паллах, ун пек чухне эрехсĕрех иртмест пулĕ хăнавĕрле тени. Хайхискерсем чĕлхе çемçелмелĕх тесе пĕр черкке пушатсан, виçе пирки пачах та манчĕç. Хаяр шĕвек вара хăйĕннех тăвать.

Акă вăхăт каçхи тăхăр сехет ĕнтĕ. Ленăпа Петĕр хăнаран киле таврăнчĕç, çапах та лăпланса ларманрĕç-ха. Каллĕ-маллĕ уткаланă хыççăн пĕр шухăш патне килсе тухрĕç хайхискерсем. Ытти чухнехи виçене çитеймен иккен. Çавăнпа та Лена кăмăлтуйăма лăплантарма лавккана тухса утрĕ, унтан эрех тата пирус туянса килчĕ. Петĕрпе сĕтел хушшине ларса 0,25 литр кĕрекен савăта пĕр самантрах пушатрĕç. Арçын вара кăвак тĕтĕм йăсăрлантарма балкон çине тухрĕ.

– Унта Петĕр нумаях та тăмарĕ, тĕтĕм мăкăрлантарса пӳлĕме кĕчĕ, аллинче – сигарет. Паллах, çакă мана килĕшмерĕ. Çавăнпа та пирĕн хушăра калаçу-хирĕçӳ пуçланчĕ. Эпĕ хам хуçа пулнине шута илсе нумай шухăшласа тăмарăм, алла пушă савăт илтĕм те ăна пуçĕнчен çапрăм. Хайхискер унăн пуçĕ çинчех çĕмĕрĕлсе ванчĕ, суранран юн сăрхăнчĕ. Пирĕн хушăри хирĕçӳ хĕрӳленчĕ кăна. Эпĕ те парăнмарăм, тарăхнипе сĕтел çинчи çĕççе илтĕм. Ăна кăкăрĕнчен, хырăмĕнчен темиçе хутчен чикрĕм. Юхакан юн вăйланса пычĕ, эпĕ çав тери хăраса кайрăм. Пулни-иртнине ăнкарма пуçларăм та çав самантрах хама урăлнă пек туйрăм. Петĕре пĕрремĕш пулăшу пама пуçларăм, – çапларах сăнлать хĕрарăм хăй тунă преступление.

– Чăтма çук ыратнипе эпĕ васкавлă пулăшу ĕçченĕсене чĕнтĕм, – пулчĕç Петĕрĕн сăмахĕсем.

Çапла вара преступлени тунă хĕрарăм хăй айăпне туллин йышăннă, çавна май вăл халĕ суд приговорне вăя кĕртет.

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн çумĕ,**
**юстици советникĕ.**

# Укçа вăрри тытăннă

Ниçта та ĕçлемен Марук тĕрлĕ ял тăрăхĕнче пурăнкаланă, сывлăх тĕлĕшĕнчи хăш-пĕр кăлтăка пула сиплев учрежденийĕнче учетра тăнă. Тĕл пулсан вара ытларах сыпкалать çав хĕрарăм. Пулăç пулăçа таçтанах курать теççĕ вĕт халăхра, ку та çавна евĕр тăтăшах хăйĕн пеккисемпе тĕл пулнă. Çапла вара пĕр кунхине Марук тĕрĕс çултан пăрăнчĕ. РФ УК 158 статьян 1 пайĕнче çырнă йĕркене пăсса преступлени турĕ.

– Маларах эпĕ пĕр арçынпа унăн хуçалăхĕнче пурăнаттăмччĕ. Вăл йывăр чире кайнă пирки мана унăн тăванĕсем кайма ыйтрĕç. Çапла вара ниçтах та вырăн çук пирки эпĕ çав ялтах тепĕр тапхăр урăх арçын патĕнче пурăнтăм. Лару-тăру йывăрланса пычĕ. Пĕлĕшсемпе унта-кунта ĕçкелерĕм тата тĕрлĕ çĕрте выртса тăтăм.

Пĕррехинче эпир каллех йăлана кĕнĕ тăрăх хĕрарăмсемпе пĕрле эрех ĕçме пухăнтăмăр. Черкке хыççăн черкке пушанчĕ, мĕн пурри сахал пек туйăнчĕ. Çапла вара эпĕ лавккана çул тытрăм. Каялла таврăннă çĕре хăшĕ тухса кайнă, хăшĕ çывăрать. Ку маншăн питĕ меллĕ самант пек туйăнчĕ. Эпĕ часах пĕрин кĕсйинче укçа асăрхарăм, икĕ пин тенкĕ кăларса илтĕм. Халĕ вара парăм тӳлеме те, ĕçмелли туянма та пулать. Йăлана кĕнĕ тăрăх каллех лавккана утрăм. Çав каç вара эпĕ пĕрисен сарайĕн çӳлти хутĕнче çĕр каçрăм. Хам айăпа ăнланатăп, анчах та икĕ пин тенкĕ укçана паянхи кун каялла тавăрса пама пултараймастăп, – каласа парать хĕрарăм следстви вăхăтĕнче.

**Редакцирен: прокуратурăн çак икĕ материалĕнче те ĕçпуç эрех-сăрапа çыхăннă. Шутласа пăхăр-ха, çак преступленисем симĕс шĕвек ĕçмен пулсан пулман та пулĕччĕç. Çак икĕ хĕрарăм следовательсен аллине те лекмĕччĕç.**

**Р. МАКАРОВА.**

Спорт

# Хăвăрт утакансем те, йĕлтĕрçĕсем те маттур

Олимп чемпионки В. Егорова ячĕллĕ Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче спортри ăсталăха туптакансем çулталăка çитĕнӳсенчен пуçларĕç.

Январĕн 9-мĕшĕнче Етĕрне хулинче хăвăрт утакансен ăмăртăвĕ иртрĕ. В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулăн тренер-преподавателĕсем В. Киселев тата С. Васильев ертсе пыракан çамрăк спортсменсен ушкăнĕ те çак ăмăртăва хутшăнса медальсене тивĕçме пултарчĕ.

Хăйсен ӳсĕмĕнче Лилия Романова, Роман Куликов, Эмилия Терентьева, Сергей Белов (пурте спорт шкулĕн Муркашри уйрăмĕнчен) тата Стас Николаев (Çатракассинчи уйрăмран) çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç.

Людмила Никитина (Çатракассинчи уйрăм) 2-мĕш вырăна тухма пултарчĕ. Анна Милютина, Анжела Федорова (иккĕшĕ те Муркашри уйрăмран) тата Иван Иванов (Çатракасси) ăмăртура 3-мĕш вырăнсем йышăнчĕç.

Икĕ кун маларах вара И. Смирнов тата Н. Скворцов тренер-преподавательсем патĕнче ăсталăх туптакан йĕлтĕрçĕсем Мари Эл Республикинчи Туçи Çармăс районĕнчи Виловатово салинчи ăмăртăва хутшăнчĕç.

Алексей Харьков тата Сергей Белов ылтăн медальсене тивĕçме пултарчĕç. Игорь Павлов, Галина Михайлова, Стас Степанов, Алексей Трофимов тата Ирина Замятина хăйсен ӳсĕмĕсенче иккĕмĕш вырăнсем йышăнчĕç. Леонид Николаевпа Виктория Тихонова виççĕмĕш вырăнсене тухрĕç.

Çамрăк спортсменсене малашне те ăнăçусем сунатпăр!

**А. ПЕТРОВ,**
**спорт шкулĕн завучĕ.**

Аукцион

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ АУКЦИОНА НА ПРАВО ЗАКЛЮЧЕНИЯ ДОГОВОРОВ КУПЛИ-ПРОДАЖИ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее - аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 14.01.2013 г. № 11. Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.

**Характеристика объектов купли-продажи:**

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:260101:150, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д.Изедеркино, ул.Молодежная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1914 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 22 240 (двадцать две тысячи двести сорок) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (4448 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1112 руб. 00 коп.)

Лот №2 – земельный участок с кадастровым номером 21:17:020101:274, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д.Хундыкасы, ул.Юркино, для строительства и обслуживания магазина, площадью 64 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 35 100 (сорок восемь тысяч девяносто пять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (7020 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1755 руб. 00 коп.)

Информация о проведении аукциона: Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810975025013001 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

4. Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

5. Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах.

Сроки приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 21 января 2013 года по 25 февраля 2013 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе. С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора купли-продажи земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии - 26 февраля 2013 года в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка. Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится 27 февраля 2013 года по месту адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 9.00, Лот №2 – 9.20.

# Кил тата хушма хуҫалӑх



## Кирлӗ пулӗ

– Ҫимӗҫре рис пӗрчӗклӗ те шурӑ пултӑр тесен пӗҫернӗ чух унта кӑштах лимон кислоти хушмалла.

– Аш авӑртнӑ хыҫҫӑн чӗрӗ ҫӗр улми е хытӑ шурӑ ҫӑкӑр кӑларсан аш арманне ҫӑвасси самай ҫӑмӑлланать.

## Ялти учитель



«Шкул ҫулӗсенче вӗрентекен каланӑ кашни сӑмаха ӑша хывма пултарни пурӑна-киле хӑвӑрах кирлӗ пулать. Ҫакна ҫулсем иртсен ҫеҫ ӑнланса илни чавса ҫывӑх та ҫыртма ҫук тенипе тӳр килсе ан тухтӑр», – тетчӗ Кашмаш шкулӗнчи хамӑн пӗрремӗш вӗрентекен Т. Андреева. Татьяна Андреевна ҫиччӗ виҫсе каланӑ сӑмахсем пурнӑҫ чӑнлӑхӗ пулни паян кашни утӑмрах палӑрать. Турайри вӑтам шкулта ачасене биологипе хими предметне 24 ҫул вӗрентекен Ирина Ивановӑпа **(сӑн ӳкерчӗкре)** курнӑҫса калаҫсан та вӗсем куҫ умӗнчен каймарӗҫ. Манӑн ҫӗнӗ пӗлӗшӗм педагогика институтӗнче хыҫҫӑн Турайри вӑтам шкула направленипе килнӗ те кунтах хӑйӗн пурнӑҫ йӑвине ҫавӑрнӑ. Хӑй ӗҫне юратнипе, ачасемсӗр пурӑнайманнипе, ҫӗнӗлӗхсене тӑтӑшах алла илессипе тимленипе палӑрать вӑл тӑван коллективра, хӑйсем пурӑнакан ялта.

Мӑшӑрӗпе – Александр Валерьевичпа – Ойкасра кил-ҫурт ҫавӑрнӑскерсем ҫемье пурнӑҫӗн пӗрремӗш кунӗнчен пуҫласах килти хушма хуҫалӑхра вылянӑх-чӗрлӗх, сад-пахча ӗрчетсе пурнӑҫ ҫулне якатнӑ.

– Ялта ҫуралса ӳснӗскерсем-ҫке эпир. Ҫавӑнпа та хамӑр пурнӑҫа килте ӗне, сурӑх тытмасӑр, чӑх-чӗппе хур-кӑвакал усрамасӑр, харпӑр хӑй вӑйӗпе пахча-ҫимӗҫ туса илмесӗр, ҫу кунӗсенче ирхи сывлӑмла саркаланса утӑ ҫулмасӑр курмастпӑр та, – кӑмӑллӑн калаҫать килти хуҫалӑхра ирхи ӗҫсене вӗҫлесе пӗрремӗш урока ҫитнӗ Ирина Александровна.

Ӗҫрен нихӑҫан та катара тӑман ҫемье паян килти хушма хуҫалӑхра ӗне, сурӑхсем, чӑх-чӗп, ҫулла кӑвакалсем тытать. Пурнӑҫ ыйтнипе тан пыраканскерсем вӑхӑтра килти хушма хуҫалӑх ҫӗрне пӗр гектара ҫитернӗ те паян унта туса илнӗ утӑпа пӗр ӗнесӗр пуҫне 10 пуҫа яхӑн сурӑх та усраҫҫӗ. Ҫӗр пурри вылянӑх апачӗ тӗлӗшпе пулакан ыйтусене вырӑнтах татса пама пулӑшнине те пытармарӗ кӗске калаҫура урока васкакан хӗрарӑм.

Ачаран ашшӗпе амӑшӗн ӗҫ юратӑвне курса ӳснӗ хӗрӗпе ывӑлӗ те шкул пӗтерсен амӑшӗн ҫулне суйланӑ. Паян вӗсем – педагогика енӗпе ӑс пухакан студентсем, район историне малашлӑхра ҫыракан ҫамрӑксем.

Районӑн черетлӗ кунӗ умӗн ҫакнашкал ӗҫчен ҫемье пурнӑҫӗпе паллашса тухни кӑмӑлӑма ҫӗклерӗ.

**А. БЕЛОВ.**

Врач канашӗ

## Апат-ҫимӗҫ аллергийӗ

**Чӑваш Республикин Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерствин Шупашкарти 4-мӗш номерлӗ ача больницин аллерги уйрӑмӗ пӗлтернӗ тӑрӑх кашни уяврах апат-ҫимӗҫ аллергийӗпе тата хӑш-пӗр ҫимӗҫсене организм чӑтайманнипе, бронх астми ҫивӗчленнипе сывмарланнӑ тӗслӗхсем ӳсеҫҫӗ. Пирӗн паянхи калаҫу шӑпах вӗсем пирки пулӗ те.**

Апат-ҫимӗҫ аллергийӗ – иммунна системи хавшанӑ чух апат-ҫимӗҫ продукчӗсем патне организм уйрӑмах сисӗмлӗ пулни. Аллерги ача ҫулӗсенче ытларах палӑрать. Ӳснисем вара унпа ачаранпах чирлеҫҫӗ. Апат-ҫимӗҫ аллергийӗ вар-хырӑм тракчӗн, шӑк ҫулӗсен, пӗвер, поллиноз чирӗсемпе чирлекенсем хушшинче ытларах.

Ҫакна та калаҫа хӑвармалла. Апат-ҫимӗҫ аллергине организм вӑл е ку ҫимӗҫе тӳсӗмлӗ пулманнинчен уйӑрма пӗлмелле. Мӗншӗн тесен ҫиелтен пӑхсан ҫак чирсем иккӗшӗ те пӗр майлӑ курӑнаҫҫӗ. Мӗнле уйӑрмалла-ха вӗсене?

Организм вӑл е ку ҫимӗҫе тӳсӗмлӗ пулман чухне, апат-ҫимӗҫ аллергийӗпе танлаштарсан, иммунна системинче улшӑнусем ҫук. Ку чир аталанӑвӗн никӗсӗнче ҫыннӑн ӑна сывӑх ытти чир-чӗр пулни. Тӗслӗхрен вар-хырӑм, пӗвер, нервӑпа эндокрин системин уйрӑм чирӗсем.

Апат-ҫимӗҫ аллергийӗ ҫыннӑн ӗмӗрӗ тӑршшӗпех упранса юлать пулсан, организм вӑл е ку ҫимӗҫе тӳсӗмлӗ пулманни ку чире пуҫаракан сӑлтавсене пӗтерсен палӑрмасть те.

Апат-ҫимӗҫ аллергийӗн палӑрӑмӗсем ҫинче чарӑнса тӑрар-ха тата. Клиникӑлла палӑрӑмсем шутне хӑстарни, аппетит ҫухални, апат-ҫимӗҫрен пӑрӑнни, вар-хырӑм пӑсӑлни кӗреҫҫӗ. Апат-ҫимӗҫ аллергийӗ ӳт ҫинче палӑрни – аллергодерматоз – асли сен те, ачасен те чи анлӑ сарӑлнӑ палли. Ҫак чир пуҫланнин нерва тытӑмӗ енчи палӑрӑмӗ – пуҫ ыратни тата мигрень.

Мӗнле ҫимӗҫсем аллергие ытларах ҫул параҫҫӗ-ха?

Ку ыйту ҫине пӗр енлӗ хурав пама ҫук, мӗншӗн тесен кирек хӑш апат-ҫимӗҫ продукчӗ те апатланнӑ хыҫҫӑн аллергие ҫул уҫма пултарать. Пысӑк активлӑхлӑ аллерги продукчӗсем пирки калас пулсан ҫаксене асӑнса хӑварас килет: пулӑ (уйрӑмах тинӗс пулли), тинӗс продукчӗсем (устрицӑсем, рак евӗр чӗр чунсем т. ыт. те), мӑйӑр (арахис, фундук), ҫӑмарта, сӗт, вӑрӑллӑ улма-ҫырла (абрикос, пан улмисен хӗрлӗ сорчӗсем), пахча ҫимӗҫ (кишӗр, помидор), пучахлӑ апат-ҫимӗҫ (тулӑ, сӗлӗ т. ыт. те).

Биологиллӗ активлӑ япаласене пуян апат-ҫимӗҫе ҫисен ытларах чух организм вӑл е ку ҫимӗҫе тӳсӗмлӗ пулманни палӑрать. Ҫакӑ апат-ҫимӗҫре сырпа, хӗрлӗ эрехпе, шпинатпа, помидорпа, ветчинапа, сосискӑсемпе, консервӑлӑнӑ продуктсемпе, тӗтӗмленӗ аш-какайпа, маринадсемпе, авокадопа усӑ курсан сисӗнет. Нумай чухне чир пуҫарӑвӗ продуктпа хӑйӗнпе усӑ курнинче мар, вӗсем тӗлӗшпе тӗрлӗ хими хушӑмӗсемпе усӑ курнинче (красительсем, ароматизаторсем, антиоксидантсем, эмульгаторсем, ферментсем).

Енчен те эсир хӑвӑрӑн аллерги пуҫарӑвне пӗлетӗр пулсан, уявсенче е сӗтел хушшинче вӗсене апат-ҫимӗҫре усӑ курасран пӑрӑнӑр. Кун пек чух рационтан цитрус ҫимӗҫсене, мӑйӑра, пулӑна тата тинӗс продукчӗсене, чӑх-чӗп ашкакайне, шоколада, кофене, тӗтӗмленӗ продуктсене, уксуса, горчицӑна, майонеза, хрена, редиса, ҫарӑка, помидорпа баклажана, кӑмпапа ҫӑмартана, пур тӗслӗ алкоголе те кӑлармалла. Апат-ҫимӗҫре пӗҫернӗ ҫулӑ мар ӗне ашне, кӗрпепе пахча ҫимӗҫ апачӗсене, ӗне ҫуне, олива тата хӗвел ҫавӑрӑнӑш ҫуне, пӗҫернӗ ҫӗр улмине, хура тулӑпа геркулес тата рис пӑттисене, пӗр кунхи тӑпӑрчӑна, чӗрӗ хӑярпа петрушкӑна тата укропа, арбуза тата пӗҫернӗ пан улмие, чей, сахӑр, пан улмипе слива тата хурлӑханпа чие ҫырли компочӗсене усӑ курни меллӗрех. Малтан, паллах, сывлӑх хуралҫипе канашлани вырӑнлӑ пулӗ.

Килте маларах асӑннӑ диетӑна пӑхӑнма ҫӑмӑлрах пулсан, хӑнана кайсан кунта пӗр правилӑна пӑхӑнма сӗнетӗп. Ҫынсем патӗнче е ресторанта ларнӑ чух хӑвӑра панӑ апат-ҫимӗҫ сиренӗшӗн паллӑ мар пулсан унпа усӑ курманни лайӑхрах.

**И. ЛУКАНОВА,**
**Шупашкарти 4-мӗш номерлӗ ача больницин аллерги уйрӑмӗн ертӳҫи.**

## Тухнӑ пушара сарӑлма паман

**01 пӗлтерет, асӑрхаттарать**

Ирӗке кайнӑ вут-ҫулӑм шелсӗр. Вӑл тухххӑмрах хӑй хыҫҫӑн шӗл кӑвар хӑварса пурӑнмалли ҫуртйӗре, хушма хуралтӑсене, пурлӑха пӗтерет. Унран та ытларах инкек вӑл – пушарта ҫынсен пурнӑҫӗ татӑлни. Халӗ калани кашниншӗнех паллӑ, анчах пушар хуралӗнче тӑракансем час-часах пулӑшӑва васкани кил-ҫурт хуҫисем нумай чух пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене пӑхӑнманни ҫинчен калать. «Хӗрлӗ автан» ҫунат ҫапма пуҫланин тӗп сӑлтавӗсем: усӑ ҫулӑмпа асӑрханусӑр пулни – 30 процент, электроприборсене эксплуатацилес правилӑсене пӑсни – 30 процент, ачасем шӑрпӑкпа выляни – 5 процент, кӑмакасен юсавсӑрлӑхӗ – 25 процент. Халӗ илсе кӑтартнӑ цифрӑсем пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене пӑхӑнасси ҫине пысӑк тимлӗх уйӑрмалли пирки калаҫҫӗ. Апла пулин те...

Районти пушар хӑрушсӑрлӑхне тишкерсен, кашни ҫулах вут-кӑвар алхаснӑ инкексем нумай пулни курӑнать. Ҫакӑ районта пурӑнакан кашни ҫыннах шухӑшлаттармалла. 1994 ҫулхи декабрӗн 21-мӗшӗнче пурнӑҫа кӗнӗ «Пушар хӑрушсӑрлӑхӗ ҫинчен» Федераллӑ саккунпа тата 2004 ҫулхи августӑн 22-мӗшӗнче унта кӗртнӗ улшӑнусемпе, РФ Чрезвычайлӑ лару-тӑру министерствин 2003 ҫулхи приказӗпе ҫирӗплетнӗ Раҫҫей Федерацийӗнчи пушар хӑрушсӑрлӑх правилисемпе килӗшӳллӗн районта ҫулленех «Муркаш районӗнчи экономика объекчӗсене, энергетика системисене, пурӑнмалли ҫуртйӗре кӗрхи-хӗллехи тапхӑрта вуткӑвартан хӳтӗлемелли мерӑсем ҫинчен» йышӑну кун ҫути курать. 2012 ҫул хыҫа юлнӑ май пӗлтӗр район территорийӗнче миҫе пушар тухнине те пӗтӗмлетме пулать. Тӗрлӗрен асӑрханусӑрлӑха пула Муркаш енре пӗлтӗр 42 пушар алхасрӗ. Ҫулӑмра 1,6 миллион тенкӗлӗх пурлӑх кӗлленнипе пӗрлех 5 ҫын пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлчӗ. Ҫак пӗтӗмлетӳ ирӗке кайнӑ «хӗрлӗ автан» хӑрушлӑхне кашни ҫыннах туллин кӑтартать тесе шутлатӑп.

Пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене ҫын куҫҫулӗпе ҫырнӑ тетпӗр пулсан та, пирӗн хушӑмӑрта ҫав правилӑсене пӑхӑнассине иккӗмӗш вырӑна хӑваракансем тӗл пулаҫҫӗ-ха. Кайран вара чавса ҫывӑх та ҫыртма ҫук.

Вӑраран юлать те пушартан юлмасть, тенинче «хӗрлӗ автанӑн» хӑрушлӑхне яр уҫҫӑн кӑтартнӑ. Вуншар, ҫӗршер ҫул ӑруран ӑрӑва пухнӑ пурлӑх самантрах кӗлленни кирек камшӑн та чӑтма ҫук йывӑр хуйхӑ пулни каламасӑрах паллӑ. Ҫакна ӑнлансан сыхлану та тивӗҫлӗ шайра пулмалла. Анчах... Районта тухакан пушарсен сӑлтавӗсене тишкерсен ҫынсем асӑрханулӑха малти вырӑна хуманни курӑнать. Акӑ пӗлтӗрхи 42 пушартан 34-шӗ районта пурӑнакансен килти хушма хуҫалӑхӗсенче тухнӑ.

Кӑҫалхи Ҫӗнӗ ҫул уявӗсенче «хӗрлӗ автан» канӑҫсӑрлантармарӗ пулин те кӑрлач уйӑхӗн 17-мӗшӗнче ирхи 6 сехетченех районти 37-мӗш номерлӗ пушар часне Каршлӑхри мӑнастиртe пушар тухни пирки шӑнкӑрав ҫитрӗ. Объект пӗлтерӗшлине кура икӗ хутлӑ апатлану ҫуртӗнчи вут-кӑварпа кӗрешме районти 4 пушар машинине кӑлартӑмӑр. Пушар сӳнтерекен служба, пушар сӑлтавне тӗпчекен лаборатори специалисчӗсемсӗр пуҫне Шупашкарти 5-мӗш пушар чаҫӗнчен пире пулӑшма 3 пушар машини, РФ Шалти ӗҫсен министерствин районти пайӗн ӗҫченӗсем вӑхӑтра пырса ҫитни инкеке анлӑ сарӑлма памарӗҫ. Мӑнастирти службӑра тӑракансем кӑмакапа усӑ курнӑ чухнехи асӑрханулӑха пӑхӑнманран тухнӑ хӗрлӗ автана ҫавӑрлӑхлама хӑйсем те пӗрремӗш утӑмсене тӗрӗс туни палӑрчӗ. Апатлану ҫуртӗнче пушар тухнине асӑрхасан вӗсем пӗр тӑхтаса тӑмасӑр алӑксене хупса-питӗрсе лартни пӳлӗме сывлӑш кӗрес ҫула пӳлнӗрен ҫулӑм вӑй илеймен. Эпир пырса ҫитсен вара ӑна сарӑлма памарӑмӑр.

Ҫак инкек районта пурӑнакансене хӑйсен килӗсенче усӑ куракан кӑмакасемпе асӑрханулла пулмалли пирки калать. «Хӗрлӗ автана» ҫул парас мар тесен харпӑр хӑй килӗсенче кӑмакасемпе мӑрьесене тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмаллине манас марччӗ.

**К. ПОПОВ,**
**районти патшалӑх пушар надзор уйрӑмӗн аслӑ инспекторӗ.**

Ыйту – хурав

## Импӗр чейӗ

***Паян тӗрлӗ курӑкран, улма-ҫырларан вӗретнӗ чейсен пӗлтерӗшӗ ӳсрӗ. Чылайӑшӗ вӗсене хаклать те. Пирӗн хуҫалӑхра импӗр пур. Унпа чей вӗретсе ӗҫни усӑллӑ-и? Пурне те юрать-и тата вӑл?***

**А. САМОЙЛОВА.**

Хаяр тымар е импӗр чейӗ туса ӗҫни пуҫ ыратнине ирттерет, иммунитета ҫирӗплетет. Кунпа пӗрлех ҫак чей астӑвӑма тата апат ирӗлтерессине лайӑхлатнипе паллӑ.

Ӳт-тир чирӗсем пулсан, температура пысӑклансан, хырӑмлӑх язви аптӑратсан импӗр чейне ӗҫесрен асӑрханӑр.

Импӗр чейне ӗҫме пуҫличчен хӑвӑрӑн вырӑнти сывлӑх хуралҫисемпе канашлани вырӑнлӑрах ҫеҫ пулӗ.

**С. АНИСИМОВА,**
**терапевт.**

## Усӑллӑ ҫырласем

***Ҫырласенчен чи усӑллине палӑртма йывӑр – мӗншӗн тесен вӗсем кашниех витаминсемпе пуян. Паллашар-ха хӑшӗ-пӗринпе.***

**ШУР ҪЫРЛИ (КЛЮКВА)**

Акӑ клюквӑна, сӑмахран, чылай чире сиплеме пулӑшакан эмел вырӑннех хума пулать. Ҫак ҫырлара бор, тимӗр, йод, кали тата организма кирлӗ ытти усӑллӑ веществосем чылай. Клюквӑра витаминсем те сахал мар, уйрӑмах вӑл С витаминпа пуян. Ҫырлара пур витаминсемпе тӗрлӗ веществосем пирӗн организма йӗркеллӗ ӗҫлесе тӑма кирлӗ. Клюква ҫырли организмран йывӑр хутӑшсене кӑларма пулӑшать, тӗрлӗ инфекцирен, пӳресенче чул пухӑнассинчен те сыхлать.

**ХУРА ҪЫРЛА (ЧЕРНИКА)**

Ку ҫырла антиоксидантсемпе пуян, ҫавӑнпа та вӑл организма ватӑлассинчен сыхлать. Нумайӑшӗ черника куҫӑн тӗрлӗ чирӗсенчен сиплеме пулӑшать тесе йӑнӑшать. Черника куҫ чирӗсене асӑрхаттарать, сиплемест. Ҫавӑнпа та куҫ япӑх курма ан пуҫлатӑр тесен ӑна тӑтӑшах ҫимелле. Пӗтӗмӗшле илсен вара ҫак ҫырла А, В, С витаминсемпе пуян.

